Налук ыйтăвĕсемпе

Вăхăтра тӳле те лăпкă ҫывăр

2006 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫулта Муркаш районĕнче пур шайри бюджета пĕтĕмпе 63 миллион та 299 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. Ку вăл иртнĕ ҫулхи ҫав вăхăтрипе танлаштарсан 104 процентпа танлашать. Ҫав шутран налук тӳлевĕсем федераллă бюджета 4 миллион та 836 пин тенкĕ, республика бюджетне 17 миллион та 27 пин тенкĕ, вырăнти бюджета 11 миллион та 81 пин тенкĕ, бюджетпа ҫыхăнман фондсене 30 миллион та 355 пин тенкĕ кӳнĕ.

Вырăнти бюджет структуринче ҫынсенчен илекен налук тĕп вырăн йышăнать. Вăл ҫур ҫулта 7 миллион та 2 пин тенкĕпе (63,2 процент) танлашнă. Пурлăх ҫине хуракан налук 113 пин тенкĕ (1 процент), ҫĕр налукĕ 460 пин тенкĕ (4,2 процент), тупăшран илекен пĕрлехи налук 3 миллион та 158 пин тенкĕ (28,5 процент) пулнă.

Ҫулталăк пуҫланнăранпа тӳлесе татман налук виҫин шайĕ 581 пин тенкĕ чухлĕ чакнă, 2 миллион та 734 пин тенкĕпе танлашнă. Ҫав шутран вырăнти налуксем енĕпе парăм 67 пин тенкĕ чакнă та 467 пин тенкĕпе танлашнă. Налуксем тӳлессипе пысăк парăмлă 6 организаци енĕпе 2006 ҫулта панкрута тухнин процедурине пуҫарнă.

Налуксене вăхăтра тата йĕркеллĕ тӳлесе тăрассипе хăйсен тивĕҫĕсене кирлĕ пек пурнăҫламан предприятисене асăнса хăвармалла. Кусем вĕсем «Сĕнтĕрти юсавпа техника предприятийĕ» уҫă акционер обществи, Мичурин яч. хис. ял хуҫалăх производство кооперативĕ, «Моргаушская» ПМК» чикĕллĕ харпăрлăхлă общество, ЧР Вĕрентӳ министерствин «Лазурный» патшалăх унитарлă предприятийĕ, «Моргаушская» МСО» хупă акционер обществи, «Моргаушагропромснаб» МУП, «Агроном», «Нива» агрофирма», МилГрад» чикĕллĕ харпăрлăхлă обществăсем, «Динамо», «Сеятель», Ленин яч. хис. ял хуҫалăх производство кооперативĕсем.

Отчетлă тапхăрта тĕрĕслевсем иттернин итогĕсем ҫавна ҫирĕплетеҫҫĕ. Пур шайри бюджета, бюджетпа ҫыхăнман фондсене тата уйрăм ҫынсен тупăшĕнчен налук илессипе пулнă парăмсене шутласан, тĕрĕслевсем ирттернĕ хыҫҫăн татах 12 миллион та 488 пин тенкĕ куҫарма май килнĕ. Вăл шутра налук виҫи 7 миллион та 331 пин тенкĕпе (58,7 процент), пенисем 3 миллион та 640 пин тенкĕпе (29,1 процент), штрафсем 1 миллион та 517 пин тенкĕпе (12,1 процент), уйрăм ҫынсен тупăшĕнчен илекен налук парăмĕсем 2 миллион та 173 пин тенкĕпе (17,4 процент), «Бюджет расчечĕ» карточкисенче ҫырăннă пенисем 1 миллион та 932 пин тенкĕпе (15,5 процент) танлашаҫҫĕ. «Моргаушагропромхимия» уҫă акционер обществин, «Ваюв» чикĕллĕ харпăрлăхлă обществăн, Сĕнтĕрти пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх муниципаллă предприятийĕн, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уҫă акционер обществин пысăк суммăсем куҫарма тивнĕ. Вăл шутра парăм суммисем те, пенисем те, штрафсем те пур.

Ҫавăнпа та ҫапла каласа хăварасшăн. Налуксене вăхăтра тата йĕркеллĕ тӳлесе тăнине нимĕн те ҫитмест. Пенисемпе штрафсем тӳлесе ахаль те ҫитсе пыман укҫа-тенкĕне ытларах пĕтермелле ан пултăрччĕ. Налука йĕркеллĕ тӳле те лăпкă ҫывăр тесе ахальтен каламаҫҫĕ ĕнтĕ.

Раҫҫей федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн налук тӳлекенсемпе, вĕсене регистрацилессипе тата шута илессипе ĕҫлекен пайĕ.

Паянхи пурнăҫ ыйтнипе

Хитре пулас килет-и... Килĕр пирĕн пата

Самани темĕнле улшăнсан та ҫын тенин яланах ҫын пулмалла. Урăхла каласан, кăмăл-туйăмĕпе те, ҫипуҫĕпе те ыттисем хушшинче йĕркеллĕ пулмалла.

Ахальтен мар ĕнтĕ вырăссен ҫапла каларăш пур: "Ҫынна тумтирне пăхса кĕтсе илеҫҫĕ, ăсне кура ăсатаҫҫĕ". Тирпейлĕ, пăхма хитре пулсан, кирек кама та пур ҫĕрте те хаваспах ăшă кăмăлпа кĕтсе илеҫҫĕ.

Ҫын тирпейлĕхĕ вара вăл ҫӳҫне мĕнле прическа тунинчен те нумай килет. Ҫакна валли паян условисем ҫителĕклĕ: парикмахерскисенче те кĕске самантрах тем тĕрлĕ прическа туса сăн-пите илем кӳртеҫҫĕ, ҫынна илĕртӳллĕрех тăваҫҫĕ.

Йăла ыйтăвĕсене тивĕҫтерекен ҫуртра, Муркашра парикмахерскине пурте лайăх пĕлеҫҫĕ. Муркашри мунчана ҫӳрекенсем валли те парикмахерски салонĕ пур халĕ.

Августăн 2-мĕшĕнче, Илем кунĕнче, "Моргаушавтотехсервис" предприятин кантурĕн пĕр пӳлĕмĕнче савăнăҫлă лару-тăрура парикмахерски салонĕ уҫăлчĕ. Ăна уҫаканĕсем – А.Г. Королькова тата Р.В. Павлова.

Сăмах май каласан, кунта парикмахерски салонĕ тахҫанах пулнă. Малтан унта хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ парикмахерсем ĕҫленĕ. Рената Валериановна кунта вăй хума тытăннăранпа кăҫалхи октябрь уйăхĕнче 20 ҫул ҫитет. Ҫак тапхăрта кунти салон Йăла ҫурчĕн филиалĕ пулнă. 2000 ҫулта "Моргаушавтотехсервис" предприяти ҫак пулăшăва парассине хăй ҫине илнĕ.

Рената Валериановна хальхи вăхăтра пысăк опыт пухнă, хăйĕн ĕҫне лайăх пĕлекен ăста специалист. Ăна районта та, Муркашра та пĕлеҫҫĕ, мĕншĕн тесен вăл хĕрарăм прическисене те, арҫынсене ҫӳҫ касса тĕрлĕ прическăсем тума та лайăх вĕренсе ҫитнĕ. Тепĕр майлă каласан, Р. Павлова – анлă профиллĕ парикмахер. Хăйĕн ĕҫне вăл Шупашкарти вĕрентӳпе производство комбиначĕнче алла илнĕ.

Алина Григорьевна та тăрăшуллă пулнипе ĕҫе хăвăрт хăнăхнă. Халĕ вĕсем иккĕшĕ те клиентсен кăмăлне туллин тивĕҫтереҫҫĕ.

Кирек епле ĕҫе пуҫлама та ответлăха хăйсем ҫине илме ҫăмăл мар, уйрăмах пĕччен пулсан. Ҫĕнни малтанлăха яланах хăратать. Ҫине тăрса тăрăшсан мĕн шутлани-ĕмĕтленни яланах пурнăҫланать. Р. Павловапа А. Королькован кунта парикмахерски салонне уҫас шухăш кăҫалхи апрель уйăхĕнче ҫуралнă. Укҫа-тенкĕ хĕсĕкрех пулсан та вĕсем майсем тупса пӳлĕме юсаса ҫĕнетнĕ. Паян кунта кĕме те кăмăллă. Хальхи пурнăҫ ыйтнине тивĕҫтерекен пӳлĕмре ĕҫлеме кирли пурте пур, мĕншĕн тесен компаньонкăсем яланах явапълăха ҫурмалла пайласа пĕтĕмпех шута илнĕ.

Хальхи вăхăтра кунти парикмахерски клиентсене – арҫынсене те, хĕрарăмсене те – тĕрлĕрен пулăшу парать. Вĕсен шутĕнче: ҫӳҫ кассасси, кăтралатасси, сăрласси, каҫхи тата туй валли ятарлă прическăсем тăвасси, куҫ харшисене, куҫ хăрпанкисене сăрласси т. ыт. те.

Кашни ҫынна юрама, унăн кăмăлне тивĕҫтерме пĕрре те ҫăмăл мар. Мĕншĕн тесен кашнин кăмăл-туйăмĕ, ăс-хакăлĕ расна, хăйне евĕр. Анчах та пултаруллă парикмахерсем ҫакна яланах асра тытаҫҫĕ, пуринпе те ăшшăн калаҫма, вĕсен чунне ăнланма тăрăшаҫҫĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ клиентсем тулли кăмăлпа, хаваслă сăн-питпе, ăшшăн тав туса тухса каяҫҫĕ.

Ҫыннăн сăн-питне илемлĕ прическа туса татах хитрелетет. Ҫавăнпах пулĕ клиентсем таталмаҫҫĕ кунтан, черет те чакмасть. Ара, пурин те хитре, илĕртӳллĕ пулас килет-ҫке.

Алина Григорьевнапа Рената Валериановна мĕн тунипе, пуҫланипе ҫырлахса лармаҫҫĕ, лăпланма шутламаҫҫĕ. Вĕсен ĕмĕчĕсем маларах: харпăр хăй предприятине анлăлатса ҫынсене тĕрлĕ пулăшу парассине ӳстерсе пырасшăн. Сăмах май, вĕсен тĕллевĕсенчен пĕри – косметика салонне уҫасси.

Мĕнех, район центрĕнче тепĕр пĕчĕк предприяти уҫăлнăшăн савăнмалла кăна. Муркашра пурăнакансене кăна мар, ялсенче пурăнакансене те кирек хăҫан та хапăл тусах кĕтсе илеҫҫĕ кунта. Пурин валли те алăк уҫă. Алла пулсан, ăнăҫу сунар вĕсене ҫĕнĕ ĕҫ пуҫламăшĕнче, малашнех ҫулăр яланах такăр пултăр.

А. ЧЕРНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: акă вĕсем, парикмахерски салонне уҫакансем.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Вĕрентекене чысласа

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе.
Чăваш чĕлхи – анне чĕлхи.

Кашни ача ҫуралсан тăван чĕлхене итлеме тытăнать. Вăл хăй калаҫаймасть-ха, анчах амăшĕн чĕлхине ăнланать те ĕнтĕ.

Манăн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. Эпир мĕн пĕчĕкрен ҫак чĕлхепе калаҫма тытăнатпăр та мĕн ватăлса виличчене ăна упрама тăрăшатпăр. Шкула кайиччен эпир килти ҫынсенчен илтсе ҫавăн пек калаҫатпăр. Шкула кайма тытăнсан пире учительсем тăван чĕлхепе тĕрĕс калаҫма вĕрентеҫҫĕ. Тăван чĕлхепе тĕрĕс калаҫни пире пурнăҫра питĕ кирлĕ. Мĕншĕн тесен эпир диалект чĕлхипе усă куратпăр. Ҫавăнпа та учительсем пире йăнăш калаҫасран асăрхаттарсах тăраҫҫĕ.

Шкулта пире тăван чĕлхене Алиса Васильевна Иванова вĕрентме тытăнчĕ. Ҫак учительница мана пĕрремĕш курсанах килĕшрĕ. Те учительницăна юратнăран, чăваш чĕлхи урокĕсене питĕ чăтăмсăррăн кĕтме тытăнтăм. Кашни урокра ҫĕнни, интересли пулса иртет. Алиса Васильевна нихăҫан та пĕр евĕрлĕ урoксем иртермест. Унăн урокĕсем хăвăрт иртсе кайнă пек туйăнаҫҫĕ. Эпир унăн урокĕсенче питĕ хавасланса ĕҫлетпĕр. Алиса Васильевна – пĕрремĕш категориллĕ учитель. Вăл пурнăҫпа тан пыракан педагог. Хăйĕн пĕлĕвне ӳстерсех пырать, малта пыракансен опытне те алла илет. Шкулта ачасене тăрăшса вĕрентнĕшĕн ăна Хисеп грамотисем парса чысланă. Алиса Васильевна вĕрентекен ачасем районта иртттерекен олимпиадăсене те хутшăнаҫҫĕ. Вăл 2003 ҫулта районта иртттерекен "Ҫулталăкри учитель" конкурса та хутшăннă. Уншăн вăл диплома тивĕҫ пулнă. Шкулти ачасем те Алиса Васильевнăна юратаҫҫĕ. Ял хушшинче те вăл хисепре.

Ҫурла уйăхĕнче унăн ҫуралнă кунĕ. Ҫывăхарса килекен уяв ячĕпе чĕререн саламлатăп. Унăн вĕренекенĕсем ăна яланах юратчăр. Алиса Васильевнан шухăшланă ĕмĕчĕсем яланах пурнăҫланччăр. Ăна пурнăҫра ҫирĕп сывлăх, ихсĕлми телей сунатăп.

Ирина БЕЛОВА.

Сосновка шкулĕ.

Ĕҫпе кану лагерĕсенче

Сывлăхпа туслăх кунĕсем

Хаваслă ҫу кунĕсем. Кĕтнĕ каникул. Ăҫта иртереҫҫĕха ачасем ҫак кану вăхăтне? Тупсăмĕ паллă: тĕрлĕ ҫĕрте – кам лагерьте, кам тăванĕсен патĕнче, кам тăван ялта.

Акă ĕнтĕ Ильинкăри вăтам шкул ҫумĕнчи "Волжанка" лагерь хăйĕн ĕҫне вĕҫлерĕ. Сывлăха ҫирĕплетекен лагере 5-8 класра вĕренекен 15 ача ҫӳрерĕ.

Аслисем – лагерь пуҫлăхĕ И.А. Григорьева, Л.А. Раскова, И.А. Каргин ачасемпе тĕрлĕ ĕҫсем туса иртерчĕҫ. Шкул участокĕсем ҫинче тĕрлĕ ĕҫсем ĕҫлерĕҫ, кăнтăрлахи апат хыҫҫăн интереслĕ вăйăсем иртерчĕҫ.

Викторинăсемпе спорт эстафетисене ачасем хаваспах хутшăнчĕҫ. Велосипедпа ăмăртмалли конкурсра Евгений Кулемин, Дима Григорьев тата ыттисем палăрчĕҫ. Хĕрсем хушшинче Инесса Вишнева маттур пулчĕ.

Лагерь ĕҫленĕ вăхăтра "Нептун кунĕ", "Пылак ҫимĕҫ юратакансен кунĕ", "Пулăҫ кунĕ" иртрĕҫ.

Июлĕн 26-мĕшĕнче, лагерь вĕҫленес умĕн, "Пулăҫ кунĕ" уйрăмах интереслĕ иртрĕ. Вăлта хулли, вăлтапа тăхлан, витрепе ăман пухнă банкăсем пĕтĕмпех хатĕр. Инструктаж иртернĕ хыҫҫăн пурте хаваспах кӳлĕ хĕрне васкарĕҫ. Пĕрремĕш пулă тытаканĕ Дима Григорьев пулчĕ. Тĕрлĕ вырăна тăрса тухса пуҫларĕҫ пулăҫсем хăйсен ĕҫне. Витрене пулă хыҫҫăн пулă сиктереҫҫĕ пулăҫсем. Дима Ляченков пуринчен те пысăкрах пулă тытма пултарчĕ. Вася Иванов, Евгений Скачков юлташĕсемпе 106 пулă тытрĕҫ. Кăнтăрлахи апат хыҫҫăн ачасем асамлă мул шырас ĕҫе хутшăнчĕҫ.

Шкулти столовăйĕнче вăй хуракан Т.А. Лоцмановапа И.Ю. Волкова поварсем ачасене кашни кунах тутлă апат-ҫимĕҫпе сăйларĕҫ.

Лагере ҫӳренĕ ачасем хăйне евĕрлĕ лотерея иртерсе премĕк, канфетсем, йогурт, сырoксем илме тивĕҫлĕ пулчĕҫ. Хаваслă туйăмпа ачасем пурне те тав туса лагерьпе сыв пуллашрĕҫ.

Игорь КАРГИН.

Ильинка шкулĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: епле аван ҫу кунĕнче вăлтапала шыв хĕрринче.

Унчченхипе хальхине танлаштарнă май

Хамăра хамăр хисеплеме вĕренесчĕ

Паллă ĕнтĕ, июлĕн 12-мĕшĕ – Питрав кунĕ. Ăна пирĕн районта, ҫав шутра Турайра та, анлăн паллă тăваҫҫĕ. Ку уявра эпĕ ачалăхрах пулнăччĕ, мĕншĕн тесен манăн асанне ку енчен. Ҫавăнпа та унчченхипе хальхине кăштах танлаштарса пăхас шухăш пур.

Малтанхи вăхăтра ку уяв ҫитиччен уйрăм хуҫалăхсенкил хушшисене, урамсенчи лаптăксене шăлса тасататчĕҫ, йĕркене кĕртетчĕҫ, шӳрпе пĕҫерекен лаҫра та йĕрке тăвассишĕн тимлетчĕҫ, ҫурт-йĕре те тасатса тирпейлетчĕҫ.

Паллă ĕнтĕ, ку йĕркесем халĕ те пачах манăҫнă тесе калаймăн. Анчах та пур ҫĕрте те мар. Уйрăмах ҫакна урамсемпе уяв иртекен вырăн пирки каламалла. Ку вырăнта таса мар: хут татăкĕсем, кантăк тата пластика кĕленчисем йăваланса выртаҫҫĕ, ытти ăпăр-тапăр та сахал мар. Ҫакă вара, уйрăмах палăртса каларас килет, уяв пуҫланиччен вĕтха! Уяв иртермелли вырăна хатĕрлессипе пачах тимлемен тесен те тĕрĕс. Уяв концерчĕ иртерме сцена валли уйăрса панă автомашина пирки те ҫав сăмахсенех каламалла. Уяв хыҫҫăн вара ку вырăн пĕр сăмахсăрах пачах вите вырăнне кăна тăрса юлчĕ.

Пирĕнпе пĕрле кунта унччен пачах пулса курман ҫынсем те пулчĕҫ. Хамăр тавралăх илемне кăтартас вырăнне пире вырăнти влаҫ органĕсем пачах тӳнтерри-не кăтартса пачĕҫ. Апла пулсан уява тивĕҫлипе хатĕрленнĕ тесе епле калама май пур-ха?

Кунта манăн алла, ăнсăртран тенĕ пек, Чăваш Республикин Президентĕн ЧР Патшалăх Канашне янă Ҫырăвĕ лекрĕ. Ӳркенмесĕрех эпĕ ăна вĕҫне ҫитиччен вуласа тухрăм. Ҫырура "Тирпей-илем кӳртесси" уйрăм пай пур. Унта Президент ҫапла палăртнă: "Тирпей-илем кӳртесси – шăпах ĕнтĕ вырăнти самоуправленин чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕҫĕсенчен пĕри. Тасалăхпа йĕркелĕх валли укҫа-тенкĕ ытлашши кирлĕ мар, тăван ҫĕре чунтан юратни, ҫынлăха хисеплени кирлĕ".

Халĕ вара уяв пирки. Унччен уяв каруҫҫелĕ яланах пурччĕ, халĕ вăл ҫук, илемлĕ чăваш тумтирлисене те тĕл пулаймастăн. Вăхăт иртнĕ май пĕтĕмпех улшăнать пулас. Тавлашма ҫук. Анчах та ҫамрăксене те пулин савăнма каруҫҫель кирлех пулнă ĕнтĕ. Сăра кĕленчине туянса утассисĕр пуҫне мĕн юлать-ха вĕсем валли? Кунтах пуш кĕленчесене, пирус тĕпĕсене т. ыт. те пăрахаҫҫĕ.

Эсир халĕ ку пур ҫĕрте те ҫавăн пек тесе тавлашма пултаратăр. Анчах та ку пирĕнтен кашнинчен килет мар-и? Ахальтен мар ĕнтĕ Президент 2006 ҫула "Ăсхакăлпа чун аталанăвĕн ҫулталăкĕ" тесе палăртрĕ. Турай ялĕнче чиркĕвĕн сыхланса юлнă ҫурчĕ пур. Авалхи вăхăтра уява шăпах ҫак чиркӳ патĕнчи лаптăкра иртеретчĕҫ. Халĕ те ҫавăнтах. Хамăр ҫине пăхсан вара эпир, уйрăмах ҫамрăксем, ăс-хакăл хаклăхне пачах ҫухатнă пулас. Е пачах шутлама манса кайнă? Шутласа пăхасчĕ кун пирки пурин те.

Ҫынсем ыйтнипе В. МАСТЕРОВ, ĕҫ ветеранĕ.

Свердловск облаҫĕ, Краснотурьинск.